# Капкăн

№ 5
МАЙ
1936




Италипе Абиссини хушшинчи вăрçă тĕнче çĕнĕ вăрçи пуçламăшĕ пулма пулта. рат (Хаçатсенчен).

**ВĂРÇĂ:** Епĕ хама хам лăпах 22 çул çамрăкланнă пек туйатăп, 1914-мĕш çулта чухнехи пекех шутлатăп.



Капкăн ырă сунни. Килес çулхи пичет кунĕ тĕлне букварсем тăрăх 7—8 çулхи ачасем анчах вĕренмеле пултăр.

# Мухтанса каламастăп

Ерхип Ваçукĕшĕн хуť мĕн пулсан та çавах. Ăна нимпе те тĕлĕнтереймĕн. Хăйĕн ĕмĕрĕнче вăл пĕр ĕç çинчен те „çăмăл мар ăна тума“ тесе каласа курман пуљ. Калăпăр, челюскинцăсене çăлма кайнă паттăр љотчиксем пиншер километр çил-тăман витĕр, сăртсем-тусем урлă пурнăçа шеллемесĕрех кайнинчен те вăл патах тĕлĕнмен.

— А, чепуха вăл! Мĕн пур самољотпа вĕçесси, пĕрре çирĕп кĕрсе лартăн-тăк, тусан мăкăрлантарса пыр кăна. Çынсем пăрăнаканĕ—пăрăнтăр, пăрăнманни хуť те мĕнле. Пĕр утмăл-çитмĕл çухрăм çӳлеле улăхса кай та çӳлтен çынсем çине суркаласа çеç пыр,—терĕ вăл ун чухне.

Ваçукшăн йăвăр ĕç çук. Вăл ăна халиччен курман пуљ. Хĕрлĕ çартан таврăннă Хĕлимун Ерхипĕ „танкиссем çапла йăвăçсене тăпăлтарса, çырмаçатра урлă çӳреççĕ, вăл танкиссем машинăна тĕплĕн пĕлнинчен килет“ тесен, вăл чейе хĕсĕк куçне татах хĕсрĕ те, йĕрĕнчĕклĕн сурса илчĕ:

— Мĕн калаçатăр танксем çинчен! Мĕн вăл танк! Кĕрсе лар та пăркаланса пыр. Мĕн пур ĕçĕ те çав кăна. Пĕрре кĕрсе ларсан сашшăн хуť çырма мар—тинĕс пултăр, чашкăрса кайаť çеç,—терĕ.

Стратостатсемпе çӳле улăхма та ним те мар иккен.

— Хăрама йурамасť. Конешнă, Микихвĕр пек хăравçăна лартсан, тухиччен нимĕрленсе ларĕ. Епĕ пулсан çав 22 километра анчах улăхатăп-и? Улăх та улăх мĕн ывăниччен. Епĕ, мухтанса каламастăп, çуран пĕр кунра Шупашкара, 50 çухрăма çитрĕм те. Мĕн, çӳлеле хăпарма йăвăр-и мĕн? Унта ура тупанĕ ыратмасť, атă çĕтĕлмест. Ывăнсан выртса канма йураť. Йара пар, пирĕн Совет Сойузĕнче выртса каннăшăн никам та чармасť.

Ĕнер ăна йалти учитĕл йурийех уйăх çине вĕçесси çинчен, Циолковский дирижабĕлĕ çинчен каласа кăтартрĕ. Епĕ ку тĕлĕнет пулĕ-ха, тесе шутларăм. Çук. Хăнк та пулмарĕ.

—Конешнă, кайма нимех те мар. Апат-çимĕç ытларах илес пулаť. Тата апат таврашне тăварлас пулаť, çĕрме пултараť,—терĕ çăмăллăн.

Йал хуçалăх машинĕсене вăл машинă выръăнне те хумасť. Вĕсенче вĕренмели ним те çук, тӳрех

ĕçлеме пулаŤ тесе калаçаŤ. Комбайн таврашне кăткăс машин вырăнне хумасŤ.

Чепуха вăл та, комбайн. Унăн мĕн ытлашши пур. Мĕн пур ĕçĕ те çав çеç: выраŤ те çапаŤ, выраŤ те çапаŤ. А вĕт машин çапла пулас пулаŤ: выртăр, çаптăр, авăрттăр, çăкăр йе кукăљ-çăмах пĕçертĕр, тирекпе илсе тухса патăр,—тет.

Ун пек комбайн ним тума та кирлĕ мар. Тепĕр йенчен тырăранах какай кукăле, автан йашки пулмасŤ вĕт?—тесен, вăл сана тӳррех çапла ответ параŤ:

— А мĕн, машин ăшне кайнă çемĕн какай, сухан, пăрăç, уксус йарса пыма ним те йăвăр мар. Акă çакăн чухлĕ те,—тесе кăтартаŤ турчăка кукри пек хуçăк пӳрнине.

* *
*

Машинсем тăнă сарай умĕнче салатса тăкнă тырă вырмали машин выртаŤ. Акана тухас умĕнхи вăхăтраччĕ вăл. Пĕр ерне выртаççĕ уçă сывлăшпа сывласа машин пайĕсем. Ерне ĕнтĕ Ваçук çейăлкă пухаŤ.

—Ваçук, вăл çейăлкă урлашки мар, уртмах татăкĕ вăл вырнаçмасŤ.

— Ваçук, сан вăчăрасем манса йулнă.

— Ваçук, вăл плуг урапи, винтисем те кĕмеççĕ.

— Кам пĕлет. Ун те пăчăра пур, те урхалăх. Шуйттан винти, мĕншĕн кĕместĕн!—тарăхса вутă тукмаккипе ислетет Ваçук.

Пăрахса тарма та шутлаŤ Ваçук, намăс. Мĕншĕн пухăнмасŤ, çĕр çатман машинĕ. Сулла пулса вилешшĕ!—шутлаŤ çурăм лупашки тăрăх пĕчĕк канаври пек йухакан тарне кĕпипе шăлса.

Темле те хăтланчĕç. Хăш-пĕр татăкне пур шăтăка та лартса пăхаççĕ, пĕрре пухсах çитерчĕç. Кăшт çеç йăнăш пулнă: урапиcем çӳлеле пулнă, çакăнса тăраççĕ тата тырă йамалин хупăлчи айалта. ВырнаçмасŤ. Ие пайсем ытлашши йулаççĕ, йе çейăлкаран темскер купи пулса лараŤ, йе тата пуçтарса пĕтерсенех арканса кайаŤ.

Тарăхрĕ Ваçук. Пĕрре тарăхнипе машин урапине чышкипе шĕвĕртсе чышрĕ. Тепре тата пĕтĕмпе тапса салатса пăрахрĕ, винтăсене пĕр çĕре купаласа вут тукмакипе те киссе пăхрĕ.

— Рас вăл машин пулсан, хăй пуçтарăнма кирлĕ. Шуйтан кăстăрмачисем, стой!—тесе тапкăпа илчĕ вăл йулашкинчен хурлăхлă, пĕр-пĕринчен уйăрăм выртакан машин пайĕсене.

Ваçуксен ĕçĕнчен нимĕн улшăну та пулмарĕ. Мĕн пурĕ те вутă тукмакипе хĕнесе висĕ сошник пăрçа икерчи пек лапчăнса ларнă, урлаткаран алтуйи. Урăх çитĕнӳсем пулман.

— Мĕнле ку машин çĕр чăмăрĕпе çапсан та çĕмĕрĕлме кирлĕ мар,—тесе кăшкăрса йачĕ вăл агрономпа колхоз председателĕ пырса тăнă вăхăтра.

— Мĕн тăватăр есĕр?—ыйтрĕ Ваçукран агроном.

— Мĕнле мĕн тăватăр? Çейăлкă пухатпăр...

— Çейăлки ăçта?

— Акă!

— Ку çейăлкă мар... Арчипе урлатки çейăлкăн. Ытти пайĕсем кулљтиватăрăн, ку барабан молотилкăн,—тĕлĕнчĕ агроном.

Ваçукăн вăтаннипе куççулљ тухрĕ.

— Такам пĕлет ăна. Вĕренместĕр ăçтан пĕлен... Çăмăл мар машина вĕренесси. Агроном йулташ, вĕрент пире тархасшăн,—терĕ чĕрене хытарсах çак.

Тепĕр кунне ирхине вăл ыттисемпе пĕрле агроном хыççăн машин сарайне кĕрсе кайрĕ.

Н. Чурпай.

## Тивĕçлĕ оргăнсене




Хĕрача: – Епĕ пур предметсемпе те екзамĕн отличнă тытрăм. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланаччен, кĕркуннеччен, сирĕн те çакăнта асăннă пур предметсемпе те екзамĕнсем отличнă тытмала.

*Митта Петĕрĕ*

# КАЛАВСЕМ

## Вырӑс тухтăрĕпе куç тухтăрĕ

Ульйана аппа улма çисе ларнă. Пӳрт алăкĕ уçăлса кайнă та имçам сумки çакнă куç тухтăрĕ кĕрсе тăнă.

— Трахом çук-ши тесе çӳреттĕм-те!..

— Чăнах-и?—тенĕ Ульйана.—Хăш йалсем пултăнха есĕ?

— Районран... куç тухтăрĕ епĕ!—тенĕ куç тухтăрĕ.—Сирĕн йалта трахомлă çынсем пур тенине илтнĕччĕ-те...

— Ун пеккисем çук пуль халь?—тенĕ аппа.—Кашни çулсеренех темиçешер хут килсе, йешĕл-шенкерсемпе ăшалантарса хăваратăр та... пĕтнĕ пулĕ?

— Часах пĕтекен марччĕ!—тенĕ куç тухтăрĕ.—Хăрушăскер... йаланах сыхланса, тасарах пурăннинчен хăракан чир вăл...

— Çапла çав,—тенĕ Ульйана аппа.—Халĕ, колхоза кĕнĕренпе, самайах таса пурăнма пуçларăмăр пулĕ тетпĕр-ха та. Акă, кантăксене те тĕрлĕрен чĕмеклĕ чĕнтĕрсем карса пĕтернĕ. Чечексем те аванах чĕрĕлме пикенĕччĕ те,—сурăх мурĕсем çисе тухнă. Путексем çамрăк та, амăшĕсене пӳрте кӳртсе ĕмĕртетпĕр.

— Таса мар апла... таса пурăнаймастăр иккен, аппа!—тенĕ куç тухтăрĕ.—Ку ача мĕншĕн краватă айĕнче сывратă!

— Сывăрсах кайрĕ-им-ха—лăхлатса кулса илнĕ аппа, пĕчĕк путеке ыталаса выртакан пĕчĕк ачи çине пăхса.—Тин çеç выльаса ларчĕç те... Вырăсхчĕрлĕхсене çав тери йуратать вара вăл пирĕн ача! Пысăклансан вырăс тухтăрĕ тăвас тетпĕр-ха та...

— Пысăклансан пулĕ-ха та... Каплах сывратас марччĕ, аппа?

— Вара, сывăратă çав... Тăратăпăр-ха та. Пĕркун, пăрăва пусиччен, пăрула выльаса йăпаначчĕ, халĕ акă—путексемпе, пĕрĕн-кайăн... çамрăклах пусрăра пăрăвăра?

— Пусрăмăр çав! Чĕмĕре пулнă та, чӳт вилсе кайатчĕ.

— Тухтăра кăтартмарăрам?... Вырăс тухтăрĕ пур вĕт сирĕн йалăрта!..

— Пуррипе çукки пĕрех вăл тухтăрăн! Ытла та тăтăш ĕçет... Чĕнтертĕмĕр те, вăхăтра çитсе ĕлкĕреймерĕ. Мухмăрĕ уçăлсан килсе пăхрĕ те, какайне çитерсе йатăмăр вара.

— Аван мар хăтланатă-çке апла! Тĕрĕс шухăшлатăн иккен есĕ, аппа... Ачуна та вырăс тухтăрĕ тăвасшăн. Тĕрĕс... питĕ тĕрĕс. Урă тухтăр нумайрах кирлĕ пулатă малашне...

— Çапла çав!—савăнса кайнă аппа.—Тухтăр тăвас тетпĕр-ха та. Хамăра хурсан, ĕçнĕ хыççăн хăвалакан ачах пулас çук-ха та.

— Аван пулатă, аван! Трахом çуках-и вара, санăн?

— Çук пулĕ тетĕп... Кĕçĕтмест. Ĕненмесен пăхăр еппин.

Аппа куçĕсене уçса пăхнă тухтăр. Сыхланарах пурăнма, путек çумĕнчи ачана халех вăратса çăвăнтарма хушса хăварнă.

## Сутуçăпа илӳçĕ

Кăвакарма пуçланă сухаллă çын хăйсен йалĕнчи кооператива пырса кĕнĕ. Унăн-кунăн çавăрăнкаласа илнĕ хыççăн, анасласа тăракан кооператăр çине пăхнă та каланă:

— Çула пулсах пулчĕ-им ĕнтĕ?—тенĕ.

— Пулчĕ пуль çав,—тенĕ кооператăр.—Мĕншĕн манран ыйтатăн?

— Çĕлĕксем илсе килнĕ-те çавăнпа ыйтатăп!

— Параççĕ-те... Панă чухне мĕншĕн илсе килес мар?

— Пирĕн вальли каллех махоркă тийесе килеймерĕр пуль çав?

— Килеймерĕмĕр çав,—тенĕ кооператăр.—Çав тери туртассу килет-им?

— Килет пулмасăр! Спичкă та тийесе килеймерĕр-и?

— Çуллахи вăхăтра спичкăпа ашкăнма хушмасçĕ, гражданин!

— Кам ухмахĕ калатă ăна?—ыйтнă сухаллă çын.—Вут тĕртмесĕрех пушар тухасран хăраççĕ-им?

— Хăрамала çав,—тенĕ кооператăр. — Пушарĕ тухиччен хăравçăланса сыхланма вĕренес пулатă...

— Йĕп-çипсем те илсе килеймерĕре ĕнтĕ?

— Мĕн çавăн пек вĕт-шакăр ыйтусемпе антăрататăн!

— Антăратса мар-ха та... Мухмăрлă-им пуçу?

— Мăшкăлатăн, гражданин!

— Мăшкăласа мар-ха та... Кăраççин та тийесе килеймерĕре ĕнтĕ?

— Çук!—кăшкăрсах каланă кооператăр.—Çук йапаласене ыйтма хушмаççĕ, гражданин... Акă пуррисене, тархасшăн илсе кай—никам та чармастă! Колхозник вĕт есĕ? Культурлăрах пурăнма тăрăшас пулатă. Акă пудрă, одеколон, пуртă, куçкĕски, шăрça куçлă çĕрĕсем, пурçăн йенчĕк, тăм шăхличĕ...

— Есĕ ху шăхличĕ!—тенĕ сухаллă çын.—Каплах мăшкăлатăр пулсан, сирĕн пуçлăхăра каллех вĕрçĕнĕрен улăштармала пулатă-им ĕнтĕ?

— Ун пирки пухăра каласăн,—тенĕ кооператăр.—Вăхăтна ирттерсе ан тăр, гражданин! Ака тунă çĕре кай... Колхозник вĕт, есĕ?..

— Ан хăвала, шĕшлĕ ура! Ĕнерех пĕтерсе килнĕ епĕр акана, намăса та пĕлместĕр... Махуркăсăр ака тутартăр кăçал!..

Урăхран каласса тăман сухаллă çын. Сурса тухса утнă.

## Арăмĕпе упăшки

Арăмĕ Укахви йатлă пулнă, упăшки—Çинахви. Çемйеленичченех вĕсем, çамрăк çулĕсенчех, килĕштерсе пурăнкаланă. Çынсем хушшинче Çинахви пуринчен те нумайрах каласма йуратнă. Ăнлантарнă. Пурнăçри тĕрлĕ ĕçсенче малта пыракансене мухтанă. Вĕсен примерĕпе усă курма хушнă. Унăн сăмахĕсемсĕр хăйсен йалĕнче пĕр митĕнг та, пĕр пуху та пухăнса иртмен. Пĕринче çапла, Осоави-

ахим членёсен пухăвĕ хупăннă хыççăн, Укахвипе Çинахви, киле май тухса утнă.

— Ытла та вырнаçулă каласатăн-çке, есĕ!— тенĕ Укахви.—Чăтаймасăр хам та алă çупрăм.

— Çав терийех-и вара?—тенĕ Çинахви.—Хаçатсем нумай вулатăп вĕт. Нихçан та йурăхсăр сăмахсем каласа итлекенсен умĕнче йăнăшмастăп...

— Санăн сăмахусене пурте йуратаççĕ.

— Есĕ-те-и, Укахви?

— Епĕ те çав...

— Хам та, йурататăп вĕсене,—тенĕ Çинахви.— Сана та! Санăн çине пысăк шанчăк хуратăп. „Ворошиловский стрелок" значокне те çакса çӳреме тивĕçлĕ пултăн ĕнтĕ, ех...

— Пултăм çав...

— Противогазпа та лайăх вĕренсе çитрĕн...

— Çитрĕм çав...

— Парашутисăм ĕçĕпе те интереслентĕн...

— Интересленетĕп çав... Значокне те илме тивĕçлĕ пуласчĕ-ха...

— Илетĕнех... Илетĕр!—çирĕплетнĕ Çинахви.— Пирĕн çамрăксем хушшинче сан йеверлĕ маттурсем сахал мар вĕт... Калаçнăçемĕн калаçас килет... Мухтанăçемĕн мухтас килет вĕсене! Вĕсем çинче пархатарлă шанчăк!

— Хăвна ху та шанатăн-и, есĕ Çинахви?

— Шанмасăр... Епĕ çынсенчен кайа-им?

— Çынсем çине çеç шанмастăн-и, есĕ Çинахви?

— Мĕншĕн?

Çинахви çине пăхнă та Укахви, ăслă саслăн кулса йанă:

„Акă есĕ"—Хамăр çĕршывшăн, хамăрăн йулашки йун тумламĕ йулмиччен кĕрешме хатĕр епĕр!" тесе ĕнентертĕн кĕçĕрхи пухура. Çапах иккĕленетĕп. „Ворошиловский стрелок" та мар вĕт-ха, есĕ?.. Противогазне те ĕретлĕн тăхăнса пăхман вĕт-ха.

— Ку сăмахна есĕ пĕркунах каласшăнччĕ пулас?

— Каласшăнччĕ çав!.. Пăшал пеме те вĕренеймесен, шанчăклăн хатĕрленсе тăни пулат-им вара?. Пушали унта, нимĕн тĕлне йĕрне пĕлмесĕр йун йухтар!—Укахви кулнă, хăйĕн сӳтĕк упăшкине ӳпкеленĕ.

Çинахви те, Укахвипе пĕрлех, лăхлатса кулса илнĕ. Унпала танлашас килнĕ унăн. Тăрăшса тытăнсан, тен чăнахах та арăмĕнчен йулмĕ, танлашĕ. Танлашаймасан вара, халиччен-хи килĕшӳ çемйере тĕп вырăн йышăнса тăрассине ан та ĕмĕтлен!

# Тĕрĕс механикă

20 çула çитнĕренпе Çергей Котомкин писатĕл пулма хатĕрленме тытăннă. Сĕтел хушшинче ларнă вăл, нимĕн тума пĕлменнипе кăрандашне çивĕч шăлĕсем хушшинче тыта-тыта кышланă, кăтра пуçлă Пушкин портречĕ çине шухăшлă куçĕсемпе пăхнă.

— Манран Пушкинах тухаймĕ те! — тенĕ вăл поетăн биографине шутласа пăха-пăха тухнă хыççăн.—Пушкин вăл 15 çултах сăвăсем çырма тытăннă. Çапах та вăхăт халĕ иртмен-ха. Гоголь 22 çулта писатĕл ĕçне тытăннă. Гоголь пулма пултарăп-и тен епĕ те.

Çтена çумĕнче çакăнса тăнă Пушкин сăнне пуçне йап-йака тураса йакатнă Гогольпе улăштарнă та, сатирик çине йуратулă куçĕпе пăха-пăха ларнă.

— Гоголь, ман шухăшпа, Пушкинран та çӳлтерехре тăрат. Мĕн вăл Пушкин? Поет, çăмăлттай, а Гоголь тарăн писатĕл.

Вăхăт иртнĕ. Çергей Котомкин счетовод хăй пурнăçĕн çулне ытти çынсем пекех иртерсе пынă. Кăнтăрла шут шăрçисем умĕнче ларнă, дебетсемпе кредитсене шутланă, каçхине писатĕл пуласси çинчен шухăшласа иртернĕ. Çтена çумне çакса йанă Гоголь писатĕл сăнне тахçанах Лев Толстой сăнĕпе улăштарнă.

— „Вăрман касни" произведенине Толстой 25 çулта чухне çырнă, „Ача чухнехи" 26 çула çитсен. Биографи çыраканнисем те кун пирки тĕрлĕрен калаççĕ. Хăшĕсем „Вăрман касни" „Ача чухнехи"-нчен кайарахран çырăннă теççĕ. Апла пулсан...

Вăл мăнаçланса хăйĕн паспăрчĕ çине пăха-пăха илсе шухăшланă:

— Вăхăт иртмен-ха. Лев Толстой пулатăп. Епĕ халĕ 24 çул та 3 уйăх та 18 кунта çеç-ха. „Вăрман касни" тата „Ача чухнехи" çырма вăхăт пур-ха. Çулсем иртсе пынă. Шăл тухтăрĕ Котомкинăн шăлĕсене саплăк хурса тӳрлетнĕ хушăра ытахалтен çапла сăмах каласа йанă:

— 28 çулхи арçынăн 3 шăл начартарах пулни вăл нимех те мар, тенĕ.

— Çапла. Епĕр, писатĕлсем, шăлсене лайăх пăхса усраса пурăнатпăр,—тенĕ хирĕç Котомкин.

— Есĕ писатĕл-и вара?

— Мар та. Пулас тетĕп. Авă, Короленко писатĕл 30 çулта çырма пуçăннă.

Иртнĕ кунсенче епĕ Котомкина тĕл пултăм.

— Епĕ пайан 35 çул тултартăм!—терĕ вăл мана.

— Саламлатăп. Писатĕл пулма вăхăт кайа йулман-ха. Крылов хăйĕн малтанхи баçнисене 40 çулта чухне çырма пуçланă. Çапах пĕтĕм тĕнчипе чапа тухма ĕлкĕрнĕ.

— Çапла, çапла! Крылов пулма вăхăт кайа йулман-ха,—терĕ те вăл инçетрех мар ларакан книготорг магазинне Крылов сăнне илме кĕрсе карĕ.

Писатĕл пулма 40 çулта та кайа мар, анчах „пулап" тени çумне ĕçленине хушма кирлĕске. Котомкинсене çавă чăрмантарат, тесе шухăшласа илнĕ хыççăн, епĕ хамăрăн литкружокăн черетри заньатине уттартăм. В. Т.

## Пиçнĕ-пиçмен...

„Пиçнĕ-пиçмен"... йатлă йурă пур. Хăш чухне ăна шкул ачисене те йурлаттараççĕ. Кĕчкейри кĕçĕн вăтам шкулта (Сĕнтĕрвăрри р.) ирхине ачасем вальли вĕри апат хатĕрлеççĕ. Анчах та апатне пиçнĕ-пиçмен çитереççĕ те ачисен ăна çинĕ чухне „Пиçне-пиçмен" йурра йурлама тивет. Шкул директăрне хăйне мĕнле йурă йурлаттармала пулат-ши?

Йалокин.

# „ИСТОРИЧЕНХИ“

Ӳкерчӗкӗ Миаҫникован



УЧИТЁЛ:—Жандармсем ҫинчен калаҫа пар.

ВӖРЕНЕКЕН:—Епӗ вӗсем ҫинчен ӑҫтан пӗлетӗп. Асаттерен ыйт.

---

# АТЕСТАЦИ

*Н. Чурпай*

Кам пулса пӑхмарӗ-ши вӑл? Ман асатте вара „епӗ кам пулса пӑхман-ши, ҫуна тупанӗ ҫеҫ пулса курман“ тетчӗ. Ҫакӑ епӗ паллашнӑ Михалчӑ та такам та пулса курчӗ. Пекӑрта икӗ уйӑх пурӑнса „ҫӑнӑх куҫа кӗрет“ тесе пӑрахрӗ. Милицире ҫирӗм кун ӗҫлесен пуҫа сӗрӗм тивнипе таврӑнчӗ. Ун хыҫҫӑн икӗ кун завхозра, виҫӗ каҫ пулӑҫра... таҫта та ӗҫлерӗ.

Йулашкинчен теме кӑмӑл туса районри ҫутӗҫ пайне учитӗле кӗме зайавлени пачӗ. Йӑнӑш ан пултӑр тесе зайавленине йурийех Петӗркене икӗ кӗренке шултра мӑйӑрла ҫыртарчӗ. Зайавлени ҫумне пӗр 30—40 тӗрлӗрен хут татки—справкӑсем ҫӗлерӗ те леҫсе пачӗ. Унта ун авланни ҫинчен, аслашшӗ тата унӑн тӑван-пӗтенӗсем кам пулнине кӑтартрӗ, вӗсем чӑнах XIX-мӗш ӗмӗр вӗҫӗнче колхозра тӑнӑ тесе справкӑ илесшӗнчӗ, анчах ун чух колхозӗ те пулман тесен, пӑрахрӗ.

Ҫутӗҫ пайӗнче те тӗлӗнмерӗҫ.

— Ну, конешнӑ, вӑл пултарать. Мӗн пур учитӗл пуласси? Вӗрент те вӗрент,—терӗ ҫыруҫи зайавлени хитре ҫырнинчен тӗлӗннипе йӑпӑлка чӗлхипе тутине ҫуласа.

— Милици пулнӑскер учитӗл пулаймасть-и вара? Ӳсӗр ҫынна ӑса кӗртме пултарнӑ та ҫав пӗчӗк ачасене ним те мар вӗрентет. Тетрадсем тӗрӗслеме хӗрлӗ кӑранташ ил есӗ,—терӗ тепри, ӗҫпе пынӑ ҫын, Михалчӑ йенне ҫаврӑнса.

— Вӑл вӗт методикӑ, педагогикӑ тавраш не пӗлмест?—хирӗҫлеме хӑтланчӗ пӗри.

— Мӗн кӑмака ҫийӗ тума кирлӗ сана медотикӑ. Ачасене пӗрре чышкӑ чӑмӑрласа йунаса кӑтарт та ним методики те, ним педагогики те кирлӗ мар,— пӗлнӗ пек мӑн кӑмӑлӑн хушрӗ сторож хӑйӗн шалча карта пек сайра шӑлӗсене шӑтӑртатарса.

Михалчӑ (ачасем ӑна Иван Михалчӑ вырӑнне Айван Михалчӑ тетчӗҫ) мӗнле вӗрентнине пӗтӗмӗшпех каласа пама хӗн. Ун патне нимле инспектӑр та, нихӑҫан та пырса курман. Йалти ҫынсем жалӑбӑсемпе нумай пыратчӗҫ вара.

Вӗренеҫҫӗ те вӗренеҫҫӗ, тем вӗренеҫҫӗ—такам пӗлет. Дисциплинӑ вӗсен лайӑх пулнӑ. Ну, калӑпӑр, Марине инкен чӳречине аркатса тӑкнӑччӗ, Макҫӑм пиччен кӑшман калчине кӑкласа пӑрахнӑ, Ваҫлин вӗшле йыттине ҫӑкӑрпа астарса пырса, шкул пӳлӗмне хупса пӗтӗм шкулӗпе хӗнесе ҫапса пӑрахнӑччӗ, пӗрре ҫур кӗтӳ сурӑх шкула хӑваласа кӗртнӗччӗ, Ирчемес ачисене йунӑхиччен хӗненӗчӗ... Нумай вӑл. Ҫапӑҫу, паллах, пулкаланӑ, анчах ытлашши, калӑпӑр, ҫапса пӑрахасси, ал-ура хуҫса тӑкас тавраш пулман.

Ҫавӑнпа Михалчӑ та ҫав ӗҫсем ҫинчен калама пырсан хӑнк та тӗлӗнмен.

— Ничево, ача чух хӑва та ҫапла пулнӑ. Мӗн тӗлӗнмели пур, выљаҫҫӗ ачасем,—тет Айван Михалчӑ.

— Ну-и вӑйӑ, чип-чипер кантӑка вир пӗрчи пек аркатса тӑкрӗҫ...

— Лайӑх вӑйӑ, чип-чипер чӗрӗ йытта вӗлерчӗҫ, халљ вӗрмест те, ӳлемест те.

Ачасем мĕнле вĕренни ҫинчен, татах калатăп, пĕлместĕп. Вĕреннĕ пуђ вĕсем. Ара мĕн пур вĕрентме? Вĕрент те вĕрент, татти-сыпписĕр вĕрент.

Ашшĕсем, амăшĕсем йатлакалаччĕҫ. Макар пичче те час-часах:

— Виҫĕ ҫул вĕренетĕн, виҫҫе виҫĕ хут хутлама пĕлместĕн,—тетчĕ ачине.

Айван Михалчă та тĕлĕнмесчĕ.

— Патне ҫитсен хăйсемех вĕренеҫҫĕ, — тетчĕ йаланах.

Вĕренӳре вăл ним те шеллесе тăман. Ҫыру урокĕсенче вĕренекенсене чарăну паллисене сахал лартнăшăн йатлаччĕ.

— Мĕн, шалкки мĕн сире, ачасем, хӳрелĕ пăнчă? Шартлаттар кăна. Хӳрелĕ-и вăл пăнчă, хӳресар-и,—ҫавах ан шелле, ларт! Сутăн илнĕскер мар ăна шеллесе лартма.

Ытти паллăсене те пĕрре те шеллемен.

— Аху, ыйту паллисене ыйтнă чух анчах лартсан хăҫан пулатӑ ăна лартасси,—тетчĕ.

Ытти предметсене вĕрентнĕ чух та ҫавах пулнă пуђ вăл. Шеллесе тăман ĕнтĕ. Мĕн шеллен, ан тив виҫҫе виҫĕ хут хутласан хутӑ ҫирĕм саккăр пултăр, шел-и мĕн? Мĕн чухлĕ ытларах пулатӑ, ҫавăн чухлĕ лайăх. Ытлашши пăсмастӑ вăл.

Михалчă вăл ҫулталăкра тăватă-пилĕк шкула куҫса ҫӳретчĕ. Пур ҫĕрте те шеллемен ĕнтĕ вăл. Йурататчĕ вăл куҫкалама. Теме кирлĕ пулнă ăна вăл.

— Мĕн, Хветĕр Ваҫилчă пĕр ҫулта сакăр шкула ҫитрĕ? Епĕ мĕн унтан йапăх-им! Куҫарăр мана?—кăшкăраччĕ вăл ҫутĕҫ пайĕнче.

Пайан ун патне темле атестаци комиҫҫийĕ тĕнĕскер килчĕ.

— Мĕншĕн сан ачасем йапăх пĕлеҫҫĕ?

— Ничево, патне ҫитсен вĕренĕҫ,—терĕ Михалчă вăтанмасăрах.

— Мĕншĕн ҫырура йăнăш нумай тăваҫҫĕ?

— Шалкă-и мĕн!—тесе йачĕ астумасăр. Вăл „мĕн чухлĕ ытларах, ҫавăн чухлĕ лайăхрах“ тесшĕнчĕ, астурĕ.

— Сан шкулта воҫпитани ҫук!

— Районран темиҫе те ыйтса йатăм, йамаҫҫĕ,—хӳтĕленчĕ Айван Михалчă.

Комиҫҫи ним калама та аптрарĕ.

„Мĕн пур вĕрентме, вĕрент те вĕрент“ тесе кăшкăрасшăнчĕ Михалчă, анчах хăй ҫырнă тетратӑ ҫинче сапаланса выртакан хӳресĕр пăнчăсемпе хӳрелĕ пăнчăсене курсан куҫ тĕтреленсе кайрĕ, куҫ умĕнчех чарăну паллисем, цифăрсем комиҫҫипе пĕрле сиккелеме пуҫларĕҫ. Вăл ним те шарламарĕ. Атестаци комиҫҫи „Михайлăв учителре йурăхсăр“ тесе ҫырчĕ.

---

# Пољшă шкулĕнче

Пољшăра тухакан „Курйер поранны“ хаҫат унти шкулсенче ачасене хĕнесе вĕрентни ҫинчен каласа паратӑ.

Гр. Станиславйук ӳкерчĕкĕ.



— Санăн пайан мĕнле отметкăсем?
— Арифметикпа—куҫа ҫапса кăванартрĕҫ, закон божипе—ҫамкана ҫапса суранлатрĕҫ.

*Иван Мучи*

# Шăмăсăр йапала

Мăн саспаллисемпе „Чĕлхе валеçекен пункт“ тесе çырна вывĕскă çапнă çурт тĕлне çитсен, пирĕн герой Касантей куçлăхне сăмси çинчен илсе шăлчĕ те, лаши çинчен анчĕ. Лашине тункатаран кăкарса урамах хăварчĕ, йăкăр-йăкăр утса шала кĕчĕ.

Магазинăн çтенисем çине йери тавралах çипсем карса хунă та, çав çипсенчен тем тĕрлĕ чĕлхесем тирсе йанă. Хăш-хăш чĕлхесем кĕленчерен тунă пĕчĕк шкапсенче выртаççĕ, хăшĕсене „суйа чăпти“ ăшне хунă та, чăптисем çине унта миçемĕш сортлă чĕлхесем пуррине ылттăн саспаллисемпе çырса паллă тунă. Магазинăн малти çтени çине пир карса, пирĕ çийĕн вырăсла—„Язык до Киева доведет“, чăвашла—„Чĕлхе Мускава та çитерет“ тесе ĕрешлĕн çырнă.

Магазинра прикашчăксăр пуçне никам та çук. Пирĕн Касантей йĕри таврала пăхса илнĕ хыççăн, кĕленче ăшĕнчи пĕр чĕлхе çине пÿрнипе тĕллесе кăтартса:

—Акă çакă чĕлхе мĕнле йышшискер?—тесе ыйтат сывлăшне çавăраймасăр тытăнарах тăнă хыççăн.

— Вăл Гогăљ çырнă „Ревизор“-ти Хлестаков чĕлхи пулаť,—тет сăмах ваклама питĕ йуратакан прикашчăк.—35 пин курйер чупни çинчен каласа парса... суйа чăпти тыттарас тĕлĕшпе 19-мĕш ĕмĕрте тĕнчери рекорда йышăннă Хлестаковăн чĕлхи пулаť ĕнтĕ вăл. Чăркаса парас-и?

— Тăхта-ха! Ытти чĕлхесене курса тухам. Илнĕ-илнех, лайăххине илес...

— Акă кирлĕ пулсан, Заглобă чĕлхине илме пултаратăн. Сенкевич писатĕл романĕнчи Заглобă йатлă геройăн чĕлхи. Унпа халĕ те усă куракансем нумай. Ĕнер çеç мăн уссилĕскер...

— Ку?

— Аљфонс Доде романĕнчи Тараскенри Тартарен чĕлхи.

— Акă ку тата?

— Козелков чĕлхи...

— Ай, ку тата мĕнле сорт?

— Салтыков-Щедрин произведенинчи Балалайкинăн...

— Литературăри геройсен чĕлхисем кирлĕ мар. Çĕннине кăтарт.

— Балалайкин чĕлхине кивелнĕ тетĕн-и? Пĕлместĕн апла есĕ. Ку чĕлхене пайан та темиçе çын илсе кайрĕç. Усăлă ĕç тăвас вырăнне, вăл чĕлхепе пуш параппан çапса ырă йат илме аван, теççĕ.

— Маңа мăнттай чĕлхе кирлĕ.

— Ак çак йураť-и?—терĕ прикашчăк прилавкă айĕнчен питĕ вăрăм чĕлхе туртса кăларса.—„Семьдесят восьмой размер“. Кунтан вăрамми çук.

Ку чĕлхене курсан, Касантей куçĕсем вут-хĕм кăларакан пек çуталса кайрĕç, тутисем студĕн татăкĕсем йевĕр чĕтренме тытăнчĕç.

— Хамăн хаљхи чĕлхепе улăштарма пулмĕ-ши?—терĕ вăл чĕтренекен сассипе.

— Чĕлхепе чĕлхе „баш на баш“ улăштарма пултараймастпăр. 124 тенкĕ те 91 пус тÿлесессĕн улăштарăпăр. Чек çырас-и?

— Çыр!

— Кассăна тÿле!—терĕ чĕлхе распределитĕлĕн прикашчикĕ „Языки в кредит не отпускаются“ тесе çырнă пĕчĕк укушка çине кăтартса.

— Илнĕскере çăвар ăшне çаксах парăр ĕнтĕ,—тесе йăлăнаť Касантей хутпа чĕркенĕ чĕлхене прикашчик аллинчен илсен.

Чĕлхе распределитĕлĕн прикашчикĕ техничкăсене чĕнет те, вĕсемпе пĕрле Касантей çăварне çĕнĕ чĕлхе кÿртсе лартса стођарсен çилĕмĕпе пит селĕм çыпçăнтарса параť.

Распределитĕлтен тухсанах хайхи пирĕн Касантейăн çĕнĕ чĕлхи хăйĕн ĕç тухăçне питĕ вăйлă хăпартса йараť. Касантей çăварĕнче вăл чарăнма пĕлмесĕр йăваланма тытăнаť. Касантей çăварĕ, Шупашкар хулинчи „Бакалей“ магазин алăкĕ пекех, ним вĕçĕмсĕр уçăлса хупăнма тытăнаť.

Район центăрĕнчен пĕр-пĕр делопроизводитĕл пырсан Касантей çăварĕнчи çĕнĕ инструмент питĕ пысăк „напрйаженипе“ ĕçлеме тытăнаť:

— Тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе епĕр иртнĕ кĕркуннех хатĕрленсе пĕтернĕ. Çум çумлассине 120 процент пурнăçланă. Пĕр çум куракĕ шăтса тухса пуçне кăларсанах ăна татса пăрахатпăр...

Колхозниксем хушшинче çĕнĕ чĕлхе çапла кастараť:

— Районрисем мана мухтаса йачĕç. Сан пек ĕçчен председатĕл пĕтĕм районĕпе шырасан та тупас çук, тесе савăнтарса йачĕç. Мана çавăн пек татах мухтасса кĕтетĕр пулсассăн уборкăна пайанах пирĕн хатĕрленсе çитермеле. Пире тапăнассăн Германи фашисăмĕ шăлне хăйраса тăнă вăхăтра, Совет Сойузĕнчи мĕн пур кĕтессене те стаханăвла йухăм саралса кайнă вăхăтра, Итали империалисăмĕ Абиççини çĕрĕсене туртса илнĕ вăхăтра, пĕр класран тепĕр класа куçас тĕлĕшпе ачасем екзамĕн тытнă вăхăтра, пирĕн пата пăрахутсем таварсем кÿнĕ вăхăтра уборкăна хатĕрленмесĕр тăма йурамаť...

Калаť, калаť, калаť, витрепе шыв илсе пырса пуçĕ тăрăх йухтарса кăларсан кăна чĕлхине кăштах канма параť. Киле, хăйĕн арăмĕ патне, таврăнсан та Касантейĕн çăварĕнчи инструмĕнчĕ канăçа пĕлмест.

— Çусăр кукăљ çиместпĕр, ашсăр апат сыпмастпăр. Кам йертсе пынине есĕ çавăн пек тутлă апатсем пĕçерсе паракан пултăн. Епĕ сана çул кăтартса пырса, аш-пăш...

— Калаçса тăраччен çиме лар!—тет арăмĕ.

— Есĕ мана регламентпа калаçтараймăн. Калаçма çуралнă епĕ. Кампанисене епĕ илсе пыратăп. Акă, сăмахран илсен, укçа-тенкĕ пухас ĕçри прорыва епĕ пайан пĕтĕмпех тĕп туса хутăм. Çав паха ыйтăва епĕ пайан питĕ вăйлă çивĕчлетсе йатăм, питĕ çÿлĕ вырăна хăпартса патăм, тарăнлатса хутăм, сарăлтарса йатăм, доклад турăм. Доклада пурте çăварĕсене карсах итлерĕç: лохăл-лохăл кулсах вăхăта иртерчĕç...

Килте чухне çăварти инструмĕнтне пит ачаш тыткалаť: кантраран йăлă туса чĕлхине тытса тулала туртса кăлараť те, ун çине кун тăршинче çыпçăннă кăпăксемпе пыљчăксене кусарпа хырса тăкаť, тĕкĕр умне тăрса аллипе сăптăрса йакатаť, уçлам çупа сĕрсе çемçетет.

рисем пирĕн жнейкăна йусаманни çинчен, урапасем çителĕксĕрри çинчен, 15 лашана 5 пĕкĕ анчах тивни çинчен такçанах пĕлсе мана йатланă пулĕччĕç,—тет.

Çавна пĕрре района чĕнтернĕ.

— Çураки сирĕн начар иртнĕ!—тенĕ ăна районрисем.

— Начар мар! Питĕ аван иртрĕ. Аван иртнине пĕчĕк ача та пĕлет!

— Мĕн тетĕн?

— Аван иртнине пĕчĕк ачасем те пĕлсе тăраççĕ... Н-да... Пĕлсе тăраççĕ теме майĕ çукрах та, мĕншĕн тесен иртнĕ уйăхра çуралнă ачасем пĕлсе тăма пултараймаççĕ, пĕлсе выртма çеç пултараççĕ.

— Мĕн супĕлтетсе тăран кунта!—кăшкăрса тăкнă районрисем.

ран çынсем йанă.

Тĕрĕсленĕ хыççăн Касантейăн вăрăм тата пĕрмайах çăварта йăваланма йуратакан чĕлхине Капкăнпа тытса çаклатса илнĕ. Чĕлхи Капкăна çакланса ларсан, Касантей пĕтĕм вăйне пухса туртăнма тытăннă та, чĕлхи татăлнă кайнă.

Çăварĕ пушанса йулнине сиссен, Касантейăн тăмран мар тунă пуçĕ çапла шухăшласа илнĕ.

— Татăлнă пулин! Татăлсан та хама пурăнмалăх йулнă. Ун пек чĕлхепе Капкăна мар, йусанмали çурта та пырса ленкĕн, чĕлхене йарсан, вăл йал касаĕ, теççĕ ваттисем,—тенĕ.

Халĕ Касантей йусаннă, ытти йатлă-хушаматлă çавăн пек пĕр май йăваланса пуш параппан çапса ырă йат илтме хăтланакан чĕлхесем пулсан, йĕр йĕрлесе тупăпăр, йĕпле-йĕпле сиплĕпĕр, ĕç йĕркине кĕртĕпĕр.

## Хаçатсенчи вараланчăксем

### „Канма“

Куйбышĕв крайĕнчи Пухтелре тухакан „Пĕрлешўлĕ ĕç“ хаçатăн 17-мĕш номĕрĕнче Ник. Нехвет çырнă „Канма“ йатлă сăвă пичетленнĕ.

Васкаса йуртаĕ
Тимĕр кĕсре,
Вĕлт-вĕлт
Йулаççĕ хурăн-çăкасем...

Сăввине вĕçне çитиченех вуласа тухрăмăр—„тимĕр кĕсре“ мĕнне пĕлеймерĕмĕр (те автомобил, те пуйăс, те урăх йапала). Мĕншĕн кĕсре, лаша мар, йе йупах тыха мар, йе ашак мар? — Паллă мар. Йулашкинчен каланă:

„Хулран уртăнчĕ
Çил хутаççи“, тенĕ.

Çиле хутаçça чикме пултаракан сăвăça тимĕр кĕсре çине лартса „Канмă“ сăвăра асăннă „Чăваш—кассине“ йарса ăнланмала калаçма вĕрентмеле.

### 72 йăнăш

Шăмăршă районĕнче тухакан „Колхозник сасси“ хаçатăн 13-мĕш номĕрĕнче корректурă йăнăшĕсем пĕтĕмпе 72. Хаçачĕ „Капкăн“ икĕ листи пысăкĕш.

Авалхи çынсем: „Мăскал пĕчĕкçĕ, анчах хаклă“ тенĕ. Шăмăршă районĕнчи хаçатăн çав номĕрĕ пирки ун пек калама пултараймастпăр.

„Корректăр пысăк çын та, анчах çур пус укçа хакне те тăмасĕ“ теме пултаратпăр.

### Тĕтĕм

Похвĕçнĕ районĕнчи (Куйбышĕв крайĕ) „Хастар“ хаçат редакцинче, ĕçлесе ларакан пўлĕмре, пирус туртса тултарнипе, йаланах сывлама çук тĕтĕм. Анчах хутнă мунчари пек, ниĕнскер те курăнмасĕ. Çавăнпа час-часах çапла калаçнине илтме пулаĕ:

— Алло, Данилăв, есĕ кайман-и-ха?

— Кăна Мордовски калаçаĕ-и? Епĕ кайман та-ха, Краснов тухса шăвăнчĕ пулмала. Ун сĕтелĕ йенчен сас-хура илтĕнми пулчĕ.

— Хыпашласа пăх, ара, ес ăна!

Пирĕн шутпа сĕтелсем хушшисене телефонласан ырăрах пулассăн туйăнаĕ. Хăйсем тем калĕç?

## Хăшпĕр районри хăшпĕр редактăр

Хăшпĕр район хаçачĕсен хăшпĕр номĕрĕсем пĕтĕмпех постановлисемпе тулаççĕ. („За большевистскую печать“ журнал).

Сверчков художник ўкернĕ.



— Ыранхи номĕр валли материал хатĕр!

# Чăваш писатĕл



— Социалисăмла çĕнтерӳсен йурăçине, чăваш халăх сăвăçине—Николай Ива
литературĕ çарĕнчен вутлă-çулăмлă салам!

## Шелепи патне килме пултаракан çыру

*Паха йулташ Шелепи!*

Есĕ пĕтĕм чăваш халăхĕ хушшинче чапа тухнă поет.

Епĕ халĕ çеç çырма шухăш тытакан чапа тухас поет çеç пулин те, санпа пĕрле ларса сăн ӳкерес килет.

Санăн кĕнекӳсене епĕ пĕтĕмпех вулатăп, анчах вĕсене пирĕн вулав çуртĕнче тупма çук (вулав çурт пирĕн йапăх ĕçлет). Çырса йар: ăçтан тупса вулама пулĕ-ши?

Санăн аллу çăмăл пулнă майпа епĕ халиччен пулман пысăк произведени çырма шухăш тытрăм.

Çырасси, паллах, çăмăл ĕç. Анчах темĕскерле пуç ĕçлеймен пулнă пирки, хам ваљљи пçевдоним (суйа хушамат) тупма пултараймарăм-ха. Мĕнле калас—лаши пур, чĕлпĕрĕ çук пек пулса тăчĕ.

Пçевдоним шыраса тупса парас тĕлĕшпе пулăшмăн-ши мана есĕ?

Ун йышши йата та, кун йышши йата та иле-иле пăхатăп: Кулай, Хĕрлĕ йытă, Нăрлай, тата ытти те. Шухăшласа пăхнă хыççăн, çав асăннă йатсенчен нихăшĕ те кăмăла каймаççĕ.

Улĕм, епĕ çырнă пысăк томсем çине (вĕсене, паллах, вырăсла та куçармала пулат̆):

„Полное собрание сочинений Нăрлай",—тесе çырма аван мар. Ха-ха-ха! Аван мар.

Пçевдоним, ăçта есĕ!

Шелепи, çине тăрсах тупса пар. Парăр мана лайăх пçевдоним!

Ал пусни (паллă мар).

## Шелепи поет йубилейĕ майĕпе пуçа килнĕ шухăшсем

Пирĕн хăшпĕр поетсем, колхозра пурăнакан çынсем Шелепи поетăн пек ăнланмала чĕлхепе калаçнине нимĕнле те ĕненесшĕн мар.

---

Шелепи „Çĕрпӳ пасарĕ" хăш-пĕр чухне шкулта пулса иртет. (Пысăк переменăсенче).

---

Шелепи поет йулашки çулсенче сĕм куççăр йулнă пулин те, пайанхи пирĕн çитĕнӳсене пит аван курат̆.

---

Шелепи поет пĕрре анчах, пурнăçран йулса пынăшăн шеллемели поетсем нумайăн.

## есен аслă парачĕ

Тагайĕв-Сурбан ÿкернĕ.



вич Шелепи йулташа литературăра ĕçлени 30 çул тултарнă йатпа чăваш совет

## Вăл хăйĕнне пертэ

Ача (вулать): „Ех, Çĕрпĕвĕн пасарĕ,
Мĕн-мĕн кăна çук унта“.

Ашшĕ: Канверт çук. Пĕтĕм хулипе шыраса çÿрерĕм. Ниçта та тупаймарăм.

## „Капкăн“ анкеттинчи пĕр ыйту

Санăн ачусем Шелепи поет сăввисене вулаççĕ и? Вуламаççĕ пулсан, мĕншĕн вуламаççĕ; ачасем валĕçи йатарласа кăларнă Шелепи кĕнекисем сирĕн вулав çуртĕнче пулманран-ши, йе санăн ачусем пулманран?

## Илтмен çын

— „Атăр-ха хамăр умма çапла задачă лартар: виçĕ уйăхран кашни шкулта ачасен библиотеки тăвар“ тесе каланăччĕ Прамнĕк йулташ ПСК(б)П Крайкомĕн пленумĕнче. Çавăн çинчен есĕ, шкул директăрĕ, илтнĕ-ши?

— Илтмен.

— Тата есĕ чăвашсен ватă писатĕлĕ Полорус-сăв-Шелепи поетăн йубилейĕ йачĕпе шкулта литература вечĕрĕ туса иртерме кирли çинчен илтнĕ-ши?

— Илтмен.

— Апла пулсан мĕн çинчен илтнĕ-ши есĕ йулашки вăхăтра?

— Учитĕлсене ĕç укçи ĕлĕкхинчен нумай хушса пани çинчен.

## Сăмсаланайман поет Шелепи çинчен

— Ыйхă килмест. Йенрен йене çаврăна-çаврăна выртатăп. Пуçран тĕрлĕ шухăшсем тухма пĕлмеççĕ.

— Мĕнле шухăшсем?

— Шелепи поет пек, ма епĕ революциччен çуралса ÿссе çитсе поет пулман-ши? Манăн йатпа та чаплă йубилей туса иртереччĕç. Çавăн пек шухăшсем аптратнипе кăнтăрла алла ручкă тытсассăнах ыйхă пусса килет, çĕрле çывăрса кайайма-сăр аптратăп.

Данилов—Чабун.

# СЫСНА

— Мĕн пулчĕ ку сыснана? Çими пулчĕ; шыв ĕçсе çеç чунне усрать. Капла вăл пĕр-икĕ ернерен вилсе те кайĕ,—пĕççине шарт çапать сысна хуçи Йехрем.

— Чирлерĕ пуль, ăшĕ çуннипе шыв ĕçет пуль. Вырăх тухтăрĕ патне илсе кайса пăхас. Вилсе кайĕ пĕртен-пĕр сыснамăр,—тесе упăшкине ветеринар патне хăвалать арăмĕ.

— Чирлĕ пулсан выртĕччĕ вăл. Выртмасть, йалан чупса çӳрет, тесе лăплантарать Йехрем арăмне.

Сысна пирки шалт тĕлĕнсе çитрĕç Йехремпе арăмĕ.

— Етем навусĕ çисе тăранса пурăнать пуль,—тет арăмĕ аптăраса çитнĕ йенне.

— Ăçтан çитĕр вăл етем навусне? Пăх-ха, пĕтĕм йалĕпе уборнăйсене çӳреççĕ, халĕ ĕнтĕ етем навусĕ сысна çитерме мар, çĕре çемçетме кайать, тесе ăнлантарать Йехрем арăмне.

Сысна çименнипе аптăраса, Йехрем арăмĕ çĕрулми пĕçерсе, хуппине шуратса, тăвар сапса парать. Çук, сысна çимест, шăрăшласа пăхать те, валашка патĕнчен вĕлт çеç çаврăнса кайать.

Йехремпе арăмĕ сысна мĕнпе тутă пурăннине шыраççĕ, çук, тупаймаççĕ. Сысна хуçисем умĕнчех ӳсет: кĕркунне çăварланăскер, çимесĕрех виçĕ пăта çитрĕ. Халĕ тата, çимест пулсан та, çуса тасатнă пек мăнтăр, шăрчĕ те çук, йап-йака...

Кӳршисем пăхаççĕ те, шалт тĕлĕнеççĕ.

— Йехрем, вара есĕ сыснана мĕн çитерсе мăнтăрлататăн?—тесе ыйтаççĕ.

— Хамăр та тĕлĕннĕ ĕнтĕ. Çил çăтсах мăнтăрланать,—тесе таврать Йехрем.

Пĕр кӳрши хăйĕн сыснине Йехрем пек çил çăттарса мăнтăрлатмала шут тытать: пĕр кун çитермест, икĕ кун пăхмасть, ерне иртерет, сысна хутланса кĕрет. Нумайах та вăхăт иртмест, сысна вилсе выртать.

— Çук, Йехрем кӳршĕ, ман сысна çил çăтса мăнтăрланаймарĕ. Вилсе выртрĕ,—тет кӳрши.

Пĕтĕм йал тĕлĕнет Йехрем сыснинчен.

— Вăт тăк сысна, пĕр çимесĕр çурăлса кайас пек мăнтăр çӳрет,—тесе калаçаççĕ.

— Çурласан, ун çăварĕсене пурне те усрамала, мĕншĕн тесен ун çăварĕсем те, амăшĕ пекех, çил çăтса пурăнма пултарĕçĕ,—тесе сысна çăварласса кĕтеççĕ.

Колхоз председателĕ Йехреме çакăн пек приказ парать: „Сысну çăварласанах, пĕрне те ан салат, пурне те колхоз фермине пар“,—тет.

Кĕтеççĕ сысна çăварласса. Кĕтсе илеймеççĕ. Пурин те çилпе тăранакан сысна çăварĕсене курас килет, курас çеç мар, туйанас килет.

II

Çуркунне çитет. Колхоз вăрлăх тасатма пуçлать. Пĕр кĕлетне уçса пăхаççĕ. Ак тамаша: çур пӳлме тулă çук.

— Аçта кайнă?

— Кам вăрланă?—кăшкăраççĕ,—вăрра шыраççĕ, çук, тупаймаççĕ.

Пĕр колхозникĕ чухласа илчĕ.

— Йулташсем, кĕрсе пăхăр-ха пирĕн кĕлет урайĕ шăтăк мар-и?

Кĕлет урай айне кĕрсе пăхаççĕ. Хай „вăрра“ тупаççĕ. Йехрем сысни тулла чаплаттарса чăмласа выртать.

Пӳлмене пушатаççĕ. Урай шăтăкне питереççĕ. Хай Йехрем сысни кĕлет тавра чупкалать. Çук, çилпе тăранаймасть. Çăварласси те паллă мар, тен, вăл хĕсĕрех-и... Мĕншĕн тесен çемçеле пуçланă.

* * *

Çапла ĕнтĕ хăшпĕр çынсем сыснисене çитермесĕрех „çилпе мăнтăрланасса“ кĕтеççĕ.

Хăшпĕр колхозсем кĕлечĕсенче тыррисем пуррине манса кайса çăварĕсене карса лараççĕ.

---

# Вĕлле хурчĕ ылттăн хурт

Çуллахи ăшă та шăрăх, илемлĕ кунсенче тĕрлĕ пахчасенче сарă, хĕрлĕ, кăвак, шурă, кĕрен илемлĕ чечексем çинчен пылхурчĕсем пыл пухнă вăхăтра пурте:

„Вĕлле хурчĕ ылттăн хурт,
Мĕншĕн есĕ нăрлатан?
Сарă чечек тăрринче
Çаврăнса çӳретĕн?
Сарă чечек тăррине
Пыллă карас терĕн-им?..

тесе савăнса йурлаççĕ. Ытла та аван. Хуртсем нăрлатаççĕ, сарă, кĕрен чечексем çинчен пыл пухаççĕ. Анчах вăл пурин те мар. Чурпай йалĕнчи (Йетĕрне р-нĕ) „Кирăв“ колхозăн 5 вĕллери ылттăн хурчĕсем ни нăрлатмаççĕ, ни пыл пухмаççĕ. Нăрлатса вĕçме мар, вырăнтан та хускалмаççĕ. Колхозниксем те иртнĕ çулхи пек вĕлле хурчĕсем çинчен савăнăçлăн йурламаççĕ. Хурланчăклăн:

„Вĕлле хурчĕ ылттăн хурт,
Анчах пирĕн хуртсем çук;
Парук пичче пăхнипе—
Вилсе пĕтнĕ тĕппипе“—

тесе йурлаççĕ.

Шел, мăнтарăн хурчĕсем! Колхоз хурчĕсене пăхакан Пуйантайкин Павăл хуртсене хĕл каçарма лартнă чухне апат сахал панă та, 5 вĕллери хурт çур хĕлччен выçса вилсе пĕтнĕ. Апат шыранă ĕнтĕ мăнтарăн хурчĕсем. Ытла та шел. Хурчĕсемпе пĕрле колхозне те шел. 5 вĕлле хурт вилнипе 375 тенкĕ сийен курчĕ. Колхозниксем хуртсене шелленĕ пекех правлени Пуйантайкина та шеллет пулмала, ку тарана çитсе те уншăн ответ тыттарман. Епĕр те Капкăн тусĕсем ун пек Пуйантайкина хĕрхенетпĕр,—хăй те хуртсем пек выçса ан вилтĕр тесе, Капкăн хуранĕнче пиçнĕ йĕплĕ çăмахпа тăрантаратпăр. Кунсăр пуçне тата ответ тыттарма хушатпăр. Д—р.




## Гитлӗр министрӗ шухӑшӗпе апла

В. Филиппӑв ӳкернӗ.



**Тусӗ:**—Санӑн шухӑшупа, чи усӑлӑ производствӑ орудийӗ тесе мӗне калама пулать?

**Министр:**—16 дӳймӑлӑ оруди!

## Бӳрократла етем

— Доброљубӑв критика памӗтник лартмала тунӑ.

— Ай турах! Самокритиксене те памӗтник лартма пуҫларӗҫ!..

## Йапӑх парикмахӗр патӗнче

**Парикмахӗр.**—Есӗ бритвӑран хӑрамастӑни?

**Пынӑ ҫын.**—Бритвӑран хӑрамастӑп. Аллунтан хӑратӑп: питӗ таса мар вӑл санӑн.

## Тӗрӗс

— Ывӑҫ тупанӗ кӗҫтет. Укҫа парасса пулмала.

— Мар. Кӗҫӗ йерессе вӑл, мӗншӗн тесен аллуна есӗ нихӑҫан та супӑњпа ҫумастӑн.

## Тухтӑр патӗнче

— Чирлӗ ҫын, санӑн чире „рак желудка" теҫҫӗ.

— Тухтӑр, ман хырӑмра рак пулма пултараймасть, мӗншӗн тесен ӗҫнӗ чухне епӗ кирек хӑҫан та ракпа мар, воплӑпа ҫырткаланӑ. Воплӑ пулма пултарать.

## Куљтурсӑрлӑх

— Курмастӑн-и, ав унта „тапак туртма йурамасть" тесе ҫырнӑ. Есӗ итлеместӗн. Хут пӗлмен ҫын мар пулӗҫке есӗ.

— Хут пӗлнӗрен ҫапла пулчӗ ҫав... „Туртма йурамасть" тесе ҫырнине вуларӑм та, килтен тухнӑранпа та тапак туртманнине аса илнипе туртас килсе кайрӗ.

## Начар йурӑҫӑ

— Ку артист мӗншӗн йурӑри чи ҫинҫе нотӑсене илсе йурланӑ чухне, ик куҫне те хупать?

— Итлесе ларакансем кӑмӑлламасӑр пӑхса ларнине курас мар тесе.

## Пӗре вӗреннӗ пирки

— Атте, акӑ ҫакӑ музӑка Лист композитӑр ҫырнӑ.

— Мӗн тетӗн?

— Лист, тетӗп.

— Лист пулсан „дела" ҫумне ҫӗлесе ларт.

## Тертленекен

— Мӗн есӗ тертленсе ларатӑн? Пилӗк кун пӗр пӗчӗк кӗнеке листисене уҫа-уҫа хупатӑн?

— Ку кӗнеке пирки критикӑ ҫырас тетӗп. Вуларӑм-вуларӑм, пӗр йанӑш та тупаймарӑм. Ҫырасси пулмасть пулӗ.

## Процес

Буљварти тенкел ҫинче йӗкӗтпе хӗр лараҫҫӗ. Хӗрӗ калать:

— Кӑҫал курорта кайса килес, тетӗп. Тухтӑрсем: ӳпкере процес пур, терӗҫ.

— Ӳпкери процес мӗн вӑл. Манӑн Аслӑ сутра процес пур. Ку вара чылайах шухӑша кайтарать.

## Йӑпӑлти

— Ҫӗлӗкна илсе пуҫна кама тайрӑн? Кунта никам та ҫукҫке.

— Ма ҫук. Пуҫлӑх портфелӗ пур. Ҫавна...






# Капкăн „чĕлхи“

## Отметкă

Çитмĕл те çичĕ лайăх шкулти çитмĕл те çичĕ учитĕл ачасене мĕнле тĕрĕс отметкăсем параç-çĕ, çавнашкалах Вăрмар районĕнчи Аслă Йенкассинчи вăтам шкул директăрĕн—Йакăвлĕвăн тĕрĕс отметкă пама вĕренмеле пултăр.

Шкулта вĕренекен Федорăва Раисăна çитмĕл те çичĕ хут хăйĕн хватерне шыв кӳрсе панăшăн çеç, уроксене ним пĕлмен çинчех „отличнă“ лартса парса учитĕл йатне çĕр тĕпнех намăслантарса чикнĕ пирĕн наукă çынĕ Йакăвлĕв.

Вулаканĕсем—кулĕç, Райçутĕçпайĕ—йатлĕ! (Тфу, тфу! Йакăвлĕва виçĕ хут йатламала).



## Ыйхă

Çитмĕл те çичĕ тинĕс леш йенче те мар, çитмĕл те çичĕ çăлтăр çийĕнче те мар—хамăр çăмса айĕнчех, Шăхасан районĕнчи Троицкă йалĕнче Осоавиахим организатăрĕ Григорйĕв, çитмĕл те çичĕ асаймĕç карчăкĕсем тухатнă пек çывăрса Осоавиахим организацине сапалартарса йанă. Осоавиахим членĕсене вĕренме тесе пĕлтĕрех районран илсе килнĕ икĕ протигогаз, пĕр винтовкă, пилĕк плакат пайан кун та етем аллине тĕкĕнмен çĕрте тусанпа витĕнсе выртаççĕ,

„Капкăн лаççинчен хурçă йĕп туйанмала пултăр. Йĕппипе Григорйĕва айăк пĕрчинчен йĕплесе вăратмала пултăр. Йĕплекенĕ Шăхасанри Осоавиахимăн райсовечĕ пултăр (Тфу, тфу! Григорйĕва виçĕ хутчен йĕплемеле).

## Пыр

Итлекенĕсем тĕлĕнĕç, вулаканĕсем вар хыпаласах кулĕç. Култараканĕ Шăхасан районĕнчи Троицкă йалĕнчи пуçламĕш шкул директăрĕ Логинов Александр пулĕ.

Çак учитĕл шкул валљи ӳстернĕ вунсакăр кролике хăйĕн пырĕ витĕр шампа хырăмнеле чăмпăлт! сиктерни çинчен шăмăсăр чĕлхипе пушă параппан çапса кăтартрĕ. Какай çисе самăрăлнă пырĕ:—Кроликсене йытăсем тытса çисе пĕтерчĕç,—тесе суйĕ.

Шкул пурлăхĕ ан салантăр. Логинăв капла ан тутăр. (Тфу! тфу! Виçĕ хутчен Логинова кролик пуçне кăтартмала).



## Ери хулинче мар, кунта

„Нйу-Йорк Таймс“ хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Ери йатлă хула пуљницинче ыйхă чирĕпе асапланакан икĕ çулхи хĕрача выртаť. Çур çул ĕнтĕ вăл пĕр вăранмасăр тарăн ыйхăпа çывăраť. Çывăрасса вăл куççене уçса çывăраť, тет.

Вăл мĕ-ĕн! Йермушкăри (Вăрнар районĕ) çтена хаçат редколлегийĕ, çур çул мар, пĕлтĕр çулларанпа пĕр вăранмасăр тарăн ыйхăпа çывăраť. Ери хĕрĕ пекех редколлеги те куçĕсене уçсах çывăраť.

Чейе Мĕтри: хăй çывăраť, куçĕ çывăрнă хушăрах чарлаттарса пăхаť!

## Уйăх пĕтни çинчен

— Мĕн шуйттанла! Пăххалĕ, пăхха, Панас!
— Мĕн?—тенĕ кум пуçне çӳлеле каçăртса.
— Мĕн „мĕнĕ“? Уйăх çук!
— Мĕнле хăйамат! Уйăх чăнахах та çук тем?!
— Çук çав!—тенĕ Чуб кумĕ тĕлĕнменшĕн çиленнĕ йевĕр пулса.—Саншăн нимех те мар-им ку?
— Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ ман?

Çапла çырнă авал Гогăљ писатĕл Пăрачкавпа Кувакинă райфинпай пуçлăхĕсем апрел уйăхĕ пĕтни çинчен майăн малтанхи чыслисенче калаçнине итлесе. Иккĕшĕ те кусем апрел уйăхĕ пĕтсе май уйăхĕ çитсе ларнине сисеймен, çавăнпах укçа-тенкĕ пухас 2-мĕш квартăл планне майăн 1-мĕш тĕлне 25—27 процент çеç тултаркалама ĕлкĕрнĕ.

— Саншăн нимех те мар-им ку?
— Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ ман?
— Урана „Капкăнран“ кăларма тăрăшасах пулаť.

## Кĕтес

Авалхи чăваш йурринче:
„Сарă пурçăн кĕтесне
Пирĕн йатсем ӳкмен пуљ,
Хура пурçăн кĕтесне
Пирĕн йатсем ӳкнĕ пуљ“, тенĕ.

Куславкка районĕнчи çыхăну аппаратĕнче ĕçлекенсен йатне „сарă пурçăн кĕтесне мар, „Капкăн“ журналăн кĕтесне ӳкертĕмĕр. „Вĕсем „Канаш“ ха-

çатпа «Капкăн» журнал сарас тĕлĕшпе мĕн-мĕн тунине микроскоп витĕр пăхсассăн та курма пулмĕ („Канаш“ сарас плана апрел уйăхĕнче пĕтĕмпе те 30 процент çурă çеç пурнăçланă). Хăшпĕр йалсоветсене „Канаш“ пĕрер екземпљар çеç пырать, „Капкăн“ журнал тĕсĕ те çук, ытти чăваш хаçачĕсем те пурри курăнмасть.

Кăмăл турам пĕр турам, теççĕ. Пĕр йĕплĕ турам хыптарар пулĕ çавсене.

## „Аçи“

Пĕр вăрă каçхине пĕринне сурăх йатса тухнă, тет. Пĕр çатан патне çитсен, çатан урлă каçаймасăр асапланать, тет. Ăна çатан хуçи курнă, тет те: ку мĕн санăн?—тесе калать тет. Лешĕ: карăк, тесе каларĕ, тет. Çатан хуçи: майраки пурçке?—тесе ыйтать, тет. Вăрри: аçи!—тесе каларĕ тет.

Çавăн пекех Ишлей районĕн Питикассинчи „Агроном“ колхоз завхозĕ пулса ĕçленĕ Гаврилăвăн 511 тенкĕлĕх тырă тухман. Тухман укçине халĕ те тўлеттермен. Акт çине „511 тенкĕ“ тесе çырнине куракан: ку мĕн санăн?—тесе ыйтсан, вăл ахаљ цыфăр, тесе калама пултарать. Растратă туни паларать-çке цыфăр çине пăхсан?—тесе ыйтсан вăл: аçи тесе калĕ-ши, ами тесе калĕ-ши? „Аçи“ тесе йе „ами“ тесе калас çук, „пичче“ тесе калĕ, мĕншĕн тесен пиччĕшĕ колхоз председателĕ пулса ĕçленипе çав растратăна унран шыраса илме васкаманни паларать, теççĕ „усал“ чĕлхесем.

---

*В. Могол*

## Редактăрпа сăпса

(*Йуптару*)

Çтена хаçат редактăрĕ патне
Сăпса хăнана вĕçсе çитнĕ:
— Тĕрĕссипех пĕлес килеччĕ ман сиртен,
Айăкран илтнĕ халап-сăмах çинчен.
Паллакансем нумай иккĕн манăн кунта,—
Кăпшанкăсем, тĕрлĕрен çунатлă чун та.
Апла-тăк, манăн ыйту çапла:
Сирĕн цехра сăпса çук-шим апла?—
Çак цех çинчен çўрет халап-сăмах,
Йртнĕ кунсем, темле пĕрре, чăнах
Заметкă çырнă тет—шăна та...
Шăрчăкăн та, иккĕ пулнă, тата,
Тĕкĕлтура час-часах çырать пулас,
Пыл хурчĕ те, активлă тет—рабкор,
Кăткă çырни те сахал мар,
Вăрăм туна та унтах, йунашар...
Тĕлĕнмеле ўсĕм сирĕн ку чух:
Шутласан шучĕ те пулас çук—
Кăткă, нăрă, тĕкĕлтура, шăна
Хаçатра вырăн йышăнать.
Сирĕн цехри рабкорсем хушшинче
Сăпса та пулĕ тетĕп, еп?
Пыл хурчĕпе шăна пулсассăн, теп?
— Сăпса?—йăвăрăн сывларĕ редактăр:—
Цехра кам патăр вырăн сăпсана.
Мăшкăласа çўреттерĕп ак, сана.
Еп хам çыратăп вĕт веçех вĕсене.

П. Шулкер куçарнă.

## Пулсассăн форми—пулать рифмă норми

(*Сăвă çырнă чухне рифмăсем тăвасшăн çеç тăрăшакансенчен мăшкăлакан сăвă*).

Манăн умăмра пит тарăн çырма,
Пуçларăм епĕ сăввăма çырма.
Çырма хĕррипе йешĕрет улăх.
Есĕ ун урлă аван каçса улăх.
Çакă улăхра пит тарăн çаран,
Шăрăх пиркийех çўретĕп çарран.
Вал улăх тавра çаврăнап виç хут.
Пĕтмест-ха манăн çаплах шурă хут.
Улăх варрипе выртатĕ мăн çул.
Вăхăт çитмесĕр çарана ан çул.
Акă çул çинче йатăнчĕ тусан.
Вĕçмĕ ак тусан, шоççине тусан.
Киле кайнă чух куртăм епĕ хыр.
Есĕ унăнне хуппине ан хыр.
Çийес килнĕрен йарăнчĕ ман пыр
Павулми çиме пирĕн пата пыр.
Киле çитнĕ чух тупрăм икĕ пус.
Илетĕн пулсан ун çине ан пус.
Çич çулхи ача:—çаврăнать, тет çĕр.
Кăна пĕлмесен, пайанах выртса çĕр.
Пўрте кĕтĕм те хĕпĕртерĕ куç.
Аш йашки çиме тĕпелерех куç.
Сĕтел хушшиче çаврăнчĕ ман пуç.
Картоншкă çие тăварне ес пуç.

Сăвă пичете йурăхсăр пулсан пĕлтерĕр, мĕншĕн йурăхсăр пулать. Нимĕн те пĕлтермесен пичете тепĕр хут çырса йаратăп. Ку сăвва кĕртсен малашне татах та усăлă, вирлĕ сăвăсем шăранса тухĕç. Ку сăвва шухăш йенчен йапăх пулсан та кĕртме йурать пулĕ тетĕп, мĕншĕн тесен есĕр йапăх сăнвăсеех пичете кĕртеттĕр, кунашкаллисем сайра-ха.

О. И. Р çырса илнĕн

## Йулташлă шарж

В. Макарăв ўкернĕ.



Мăаçников художник.

# Учитĕл

Андрей Гаврилчăна пасар кун тĕл пултăм. Вăл пирусне мăкăрлантарса ман пата çитсе тăчĕ.

— Сывлăхусем мĕнле? Пурнăç тăрăх аван чупатăн-и?—тетĕп аллине çемçен чăмăртаса.

— Çу-ук, чупсах кайаймастăп. Уйăх çурă ĕнтĕ пĕр вырăнтах уксах кĕсре пек сулкаланса тăратăп,—тет пирус тĕтĕмне ман сăмса çинех вĕрсе.

Çак çын пĕр вырăнтах тăпăртатса тăма пултарни кăштах тĕлĕнтерчĕ мана. Унăн пурнăçĕ çинчен пĕлес килнипе чĕрене такам шăмăлă аллисемпех кăтăкланăн туйăнса карĕ. Хамăн тăван чĕлхе те хама пăхăнми пулса кайнăран-и тен:

— Ăçта ĕçлетĕн?—тесе персе йатăм.

— Ăçта?—терĕ вăл тĕлĕнсе,—учитĕлре...

Пĕр самантра манăн куç умне кооператив правленин канцелярийĕ килсе тухрĕ. Акă çинçешке хура çын—Йăмпăлтикин Андрей Гаврилчă сĕтел хушшинче шчут шăрçисенчен вут-хĕм сирпĕнтерес пек шатлатарса ларать.

— Есĕ,—тетĕп,—счетоводран тухрăн-и?

Андрей Гаврилчă, питĕ мăнкăмллăн, пирус тĕтĕмне литăр кĕленчи тĕпĕ майлă сарăлса тăракан сăмси шатăкĕнчен вĕрсе кăларчĕ те:

—Е, е,—терĕ,—епĕ счетоводра ĕçличченех учитĕл пулнă. Учитĕлрен тухсан служăшчи те пулнă, агент та, инструктăр та епех пулнă...

Ытти калаçусем пĕтсе çитнĕ май шкул пурнăçĕ çинчен калаçма пуçларăмăр. Калаçнă çемĕн хĕрнĕ тимĕр пек хĕрсе пырать Андрей Гаврилчă.



Вара картă патне пытăм та пўрнепе вăр! çавăрса кăтартрăм пĕр вырăна. „Çакăнта Мадагаскар“—терăм.

— Фу!—тет,—шăвăнмала пулать пуль ку ĕçрен те. Йалан хăлхара ача сасси йăнласа çўрет. Касçерен тетрать тўрлетсе анкă-мĕнкĕ пулнă пек ывăнатăн. Ĕç укçине сахалтарах параççĕ!—пăшăлтатать сăмси айĕнче.

— Мĕнле дисциплинăпа вĕрентетĕн?—персе йатăм тўсейменнипе..

— Мĕн мĕнле дисциплинă пултăр унта: литературăпа та, химипе те, пенипе те, физкультурăпа та вĕрентетĕп. Акă виçĕм-кун çеç,—пуçарса йачĕ каллех,—географи вĕрентекенĕ чирленĕ те, вăхăтлăха мана хушрĕç. Пытăм, снаш, класа ăнлантаратăп. „Мадагаскар“ шыратпăр картă çинче. Хам та тупаймастăп. Вара картă патне пытăм та пўрнепе вăр! çавăрса кăтартрăм пĕр вырăна. „Çакăнта“,—терĕм. Вăт йепле вăл.

Антăрамала,—тетĕп хам ăшăмра,—универсал!

Çав вăхăтра вăл манăн пуçри шухăша пĕлнĕпе пĕрех:

— Учебник пур, вуласа тух та кайса вĕрент. Мĕн унта вузсем тăрăх сĕтĕрнсе çўремели.

— Ай, ай!—тетĕп,—сахал пĕлўпе ĕçлеме кансĕртерех те!

— Ну,—майне хур пек пăркаласа илчĕ вăл,—Лăпсăрккана колхоз председательĕнчен кăларчĕç те халĕ учитĕлре мĕнле-ăшшă ĕçлет.

Ним калама аптăранă йенне:—Пыр та калаç Унтрипе!—терĕм хам ăшăмра. Ачисем те шеллĕ—вĕсене пăсаççĕ, Андрей Гаврилчă та шеллĕ—хăйĕн пĕлўне хăпартассишĕн çунмасть.

Унпа сывпулашнă хыççăн ун пек „Унтрисене“ татах та тĕл пулкаларăм епĕ. Хăшĕсем Пушкинăн сăввисене вуласа курман пулин те, литературă вĕрентеççĕ, хăшĕсем—пĕр нотă пĕлмен çĕртех, йултăшĕсем йурлакан йурăсене чухăмăн вĕрентеççĕ.

— Ех,—тетĕп хама хам,—районра пĕр икĕ-виçĕ „Унтри“ пурах ĕнтĕ, ăçтан ачасене вĕсен аллине шанса паратăн?

Çак йавăр шухăша çĕклесе пĕр уйăх майлă çўретĕп. Пĕр-пĕр наукă теорине шăл айне хурса пăхатăп та çырла пекех парăнать мур.

Пĕринче çапла шухăшлакаласа хула урамĕпе пыратăп. Çўхе тутаlă хĕрсем çинчен, инçетре пурăнакан савни çинчен, госекзамĕн çывхарни çинчен шухăшласа пуç мимине ыраттаратăп.

Сисмен те, кăлт! тĕртрĕ такăшĕ. Тĕртессе пысăк сăмсам тăринченех тĕртрĕ. Пăхатăп—ман умра Андрей Гаврилчă кулкаласа тăрать.

— На, вула! Кур ак учитĕлсен ĕç укçине ўстернине,—тĕртсе кăтартрĕ халĕ çеç илнĕ хаçачĕ çине.

Çынсем кансĕрлемен кĕтессерех кайса вулама тытăнтăмăр. Епĕ вуланă май Андрей Гаврилчă пĕр пек:

— Мĕн, тен, инженерсемпе пĕр тан илме пуçлатпăр-е? тесе кулкаласа илет.

— Çаплах, çаплах! Есĕр вĕт „инженеры человеческих душ“!—тетĕп ăна хирĕç.

—Хе, хе! Апли апла та, учитĕл йатне илтме ай, ай, ай!—пуçне пăркалать вăл.

Вуласа пĕтернĕ хыççăн калаçкаланă май йурийех:

—Есĕ пĕр ĕçрен тепĕр ĕçе куçма йуратăтăнчĕ, малашне учитĕлрех ĕçлетĕн-и?-тетĕп.

— О, о!—кусĕсене чарса пăрахрĕ вăл,—шăпăрпа шăлса кăлармасăр та тухмастăп. Ĕç укçийĕ, шкулти йĕркелĕх, учебниксем... Ех, мĕн чул тăрăшаççĕ вĕт шкулшăн!

— Есӗ ху сахал вӗреннӗ,—тетӗп хайхискерне,— ачасене йапӑх вӗрентме пуҫласанах ӗҫрен кӑларасҫӗ вӗт...

Ман ҫине сиввӗн пӑхрӗ вӑл. Хура куҫ харшийӗсем пӗкӗ пек ҫӳлеле ҫӗклене-ҫӗклене куҫӗ ҫинеле шуса анма пуҫларӗҫ.

— Манӑн пуҫ ҫук-им? Акӑ халех магазина кайса кӗнекесем илетӗп. Пӗтӗм вӑйа хурса вӗренме тытӑнатӑп. Мӗн тен, е?

— Заочнӑ вӗренес пулать?

— Халӗ кӑна института кӗрсе ҫырӑнтӑм-ха. Унсӑрӑн йурать-и? Чаплӑ йат халӗ—учитӗл, мӗн тен, е? Ой, ой ку йата илтме хӗн, вӗри йашка ҫини мар!

Сывпулашрӑмӑр. Вӑл кӗнеке магазинӗ йеннеле чупрӗ.

И. Кашлинке.

# Ӗҫпе пырсан каласа пани

Йалти художӗствӑлӑ вӑйсен пултарулӑхне пӑхса тухас тӗлӗшпе йатарласа уйӑрнӑ комиҫҫисем мӗнле ӗҫленине пӗлмен йалсоветсем те пур.



— Пирӗн кӗтӳҫӗ ӗнер пит илемлӗ кӗвӗ каласа пӗтӗм халӑха савӑнтарчӗ.

— Шӗхличӗпе-и?

— Шӗхличӗпе мар ҫав! Ройаљпе. Шоппен композитӑр ҫырнӑ ноктӳрн йатлӑ кӗвве karарӗ.

# Пурнăҫпа паллашайман

Ҫверчков художник ӳкерчĕкĕ




**Сăмсаланайман:** —Тӳррипе каласан есĕ, шăпчăк кайăк, манран та начар мар йурлатăн.

**Кайăк**:—Поет тус, есĕ апла каланиҫе итлемешкĕн пит хавас, анчах епĕ шапчăк мар, хура ҫăхан.




Епӗр тӗрӗслесе пӑхнӑ тӑрӑх, Капкӑн журнал Совет Сойузӗн ҫурҫӗрти вырӑнӗсене пӗр екземплҙар та каймасть. Хӗвелтухӑҫӗнче, хӗвеланӑҫӗнче, кӑнтӑрта пурӑнаканнисемпе пӗрлех, ҫурҫӗртисем те Капкӑн журналсӑр ан пурӑнчӑр тесе, унӑн хакне пысӑк саспаллисемпех ҫырса пӗлтеретпӗр:

**6 уйӑха—1 тенкӗ ҫурӑ,**
**ҫулталӑка—3 тенкӗ.**

Секретарь и вып. редактор *И. ИЛЛАРИОНОВ.* За ответ. редактора *Ф. АЛЕКСАНДРОВ*
Сдано в производство 5/V—36 г. Подписано к печати 2/VI—36 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 337. Заказ № 879
Формат бумаги 1/8 Об'ем 2, 5 п. л. Гор. Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Тираж 6750. Изд-газ. «Канаш»




**КАПИТАЛИСТ:** Совет Союзне кайса ҫӳрекен делегацисем унта ҫитсен ним курми суккăр пулса тăрсан лайăхчĕ...

**ЖАНДАРМ:** Совет Союзĕнчен таврăнсан ним калаҫми, чĕлхесĕр пулса ларнипе те ҫитет.